К84.09(=Чув)
Ю41
Ч-4100г

Анатолий ЮМАН

Марине

Национальная библиотека ЧР
4-041002

Посвящается моим землякам-сверстникам, которые на своих плечах вынесли суровые испытания военного лихолетья.

Автор.





Анатолий ЮМАН

Марине

(Поэма)

Ульяновск
2005 çул

ДАРСТВЕННЫЙ ЭКЗ

ББК С (чув)
Ю 41

Юман А.Ф.

Ю 41 Марине. Поэма. — Ульяновск: ОГУП «Облтипография «Печатный двор», 2005 г. – 64 стр.

Хăйĕн ҫĕнĕ поэминче чăвашсен паллă поэчĕ Анатолий Юман пĕрле ӳснĕ тантăшĕсен Тăван ҫĕршывăн аслă вăрҫи ҫулĕсемпе пĕр вăхăта килнĕ йывăр ачалăхне, ҫавăн пекех синкерлĕ ватлăхне ҫырса кăтартать. Вĕсем утса тухнă ҫав тумхахлă кун-ҫула чăн-чăн юрату кăна хăйĕн хĕвеллĕ ҫутипе ҫутатать, ҫапла вара ырă ята тивĕҫлĕ ветерансене пĕчченлĕх авăрне путса ҫухаласран сыхласа хăварать.

В своей новой поэме известный чувашский поэт Анатолий Юман описывает нелегкую судьбу представителей своего поколения, чьё детство совпало с суровыми годинами Великой Отечественной, и их столь же трагическую старость. Лишь бескорыстная земная любовь освещает этот трудный путь одиночества солнечным светом, тем самым спасая ветеранов от безвестного забвения потомков.

ПРОВЕРЕНО
20/10

ISBN 5-7572-0163-0 ББК С (чув).

Ч-41002
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

© А. Юман. 2005.

I. Кивĕ Улхаш

Кивĕ Улхаш - пысăк ял,
Чăнлă шывĕ хĕрринче
Сарăлса ларать кал-кал,
Калăн, хăй вăл пĕр тĕнче.

Мĕн чул касă та урам
Ларса тухнă ретпеле.
Утса тух-ха эс çуран -
Хăçан вĕçне çитмелле?

Пĕр урамĕн вĕçĕнчен
Тепĕрин патне çитме
Кун кунлас пулать. Пĕччен
Пит ансат унта çĕтме.

Çавăнпа пĕрне-пĕри
Паллама та ансат мар.
Хулари пек темĕр-и -
Тĕплесе çаплах калар.

Виçĕ колхоз пĕр ялта,
Утăмлаççĕ пĕр çулпа.
Ĕç ăнса пырать кунта
Çулран çулах çавăнпа.

Вĕççĕр-хĕрсĕр уй-хирте
Тырă-пулă сĕрĕшет.
Урамра, кашни килте
Ача-пăча хĕвĕшет.

Вырма ҫитсен тыр ҫинче
Пӗтӗм халӑх хускалать.
Кивӗ Улхаш яленче
Лаша лавӗ кускалать.

Пӗри каять кӗлтене,
Тепри – хире, вырмана.
Вутти кирлӗ хӗл тӗлне,
Касас пулать вӑрмана.

Вӗҫсӗр-хӗрсӗр уй-хирте
Хурҫӑ утсем ҫӳреҫҫӗ.
Вӗсене ҫӗр хуҫисем
Йывӑр ӗҫе кӳлеҫҫӗ.

Ҫӑмӑл мар аки-сухи
Ҫамрӑксене парӑнать.
Ҫӗр ҫыннин хуйхи-суйхи
Ку чух сирӗлсех пырать.

Вырмара та пур ҫӗнни -
Тырӑ хумӗ ҫийӗпе
Мал ӗмӗтлӗ ял ҫынни
Ишет хир карапӗпе.

Вырать, ҫапать, сӑвӑрать
Пӗр вӑхӑтрах тыррине.
Ватти тӗлӗнсе тӑрать -
Ӗненмесӗр курнине.

Юмахри пек туйӑнать
Ӑна ҫакӑ ҫутӑ ир.

Унăн чунĕ савăнать -
Çаралсах пырать уй-хир.

Кунĕн-çĕрĕн ăсанать
Çĕнĕ тырă пӳлмене.
Чун-чĕререн ăмсанать
Шурсухал яш çынсене.

Мĕн чул тырă ытларах –
Пуянрах Тăван çĕршыв,
Ялти пурнăç тулăхрах,
Çыннисем ун ырă-сыв.

Епле çавă паттăрсем
Ӳснĕ чăваш ялĕнче?
Паллă вĕсен ячĕсем
Вырăнти хаçатсенче.

Митрахван [1] та Кĕнеçке [2] –
Хресченсен ачи-пăчи.
Пурте ахаль çынах-çке,
Пурте Кив Улхаш каччи.

Çак ялти чăваш тĕнчи
Янраса тăрать çулла.
Ача-пăча – ун ĕнчи,
Ял хитре ăна пула.

Çĕнĕ пурнăç, çĕн хăват
Малалла ăна чĕнет.
Малашлăха çул хывать,
Ял çуллен хитреленет.

Хăлтăр-хăлтăр кивĕ çурт
Тăрса юлнă авала.
Ял çынни, пуçна ан урт,
Çунатлан малтан-мала!

Ахаль мар ял варринче
Икĕ хутлă шкул ларать,
Советсен саманинче
Ял çĕпре пек хăпарать.

Ватă шкулăн стенисем
Астăваççĕ авала.
Ятлă-сумлă тÿресем
Килсе кайнă ку яла.

Иван Яккăльччăпалан
Вырăс тусĕ Чĕмпĕртен
Кив, тумхахлă çулпала
Çÿрени синчен илтен.

Вĕсен пилĕ çитнĕ май
Кÿршĕ-аршăри ялтан
Килнĕ çамрăксем нумай
Пуçламăш кĕçĕн шкултан.

Кармуçça Ванькки [3] ăсчах,
Шурекпе [4] Итеç [5] пекки
Çунат сарнă час-часах
Черетпе çитсен екки.

Карсаккух [6] таврашĕнчен
Тухнă доктор – ăсчаха

Астăвать, манмасть тĕнче -
Ĕçĕ кирлĕ халăха.

Сахал мар ят çырăнса
Юлнă кун юпи çине.
Çамрăк ăру манмасса
Асилет халь вĕсене.

Черетпе эпир кайран
Килсе тухрăмăр кунта.
Çăпата сырса, çуран
Кўршĕри тăван ялтан.

***

Эрнере пĕрре пасар
Пухăнать лавкка умне.
Çўлĕк çине юнашар
Хур кăларса пуррине.

Кишĕр, купăста, юр-вар,
Пушăт тĕрки, çăпата...
Туянать чăваш вăр-вар,
Çўремест таçта, юта.

Качка-сурăх та ĕне
Çуллен пытăр хунаса.
Йăлтах хăвна кирлине
Тупăн кунта шыраса.

Канфетпала пĕремĕк,
Шăкăр-макăр теттесем
Туянаççĕ пĕремен
Аппасемпе тетесем.

Ачи-пăчи савăнать
Килне илсе таврăнсан.
Улма-çырла йăвăнать,
Чун çĕкленет тутансан.

Каччăсемпе хĕрĕсем
Пĕрне-пĕри куçлаççĕ.
Кĕр çитсессĕн кĕç вĕсем
Туя ларма пуçлаççĕ.

«Пĕчĕкçеç хуран пăтти»
Илĕртет яш çынсене.
Хуппи тимĕр пек хытти
Мĕн вăл çамрăк шăлсене!

Хĕвелçаврăнăш катса
Çӳпĕлеççĕ çереме.
Юри тухнă тумланса
Пасар курса çӳреме.

Иксĕлсен пасар таппи
Йĕр юлать ун хыçĕнчен –
Хĕвелçаврăнăш хуппи,
Çӳпĕ-çапă вăрахчен.

2. Марине

Икĕ хутлă çурт ялта,
Хĕç-тимĕрпе тăрланă.
Хăма сăрса кив çурта
Сарă сăрпа сăрланă.

Ку – шкул çурчĕ. Чăн кермен
Евĕр ларать çĕкленсе,
Иртнĕ кивĕ ĕмĕртен
Çак вырăнта тĕпленсе.

Пысăк, çутă кантăксем
Хула сăнĕ кĕртеççĕ.
Ăна çамрăк ачасем
Тăван кил пек тееççĕ.

Кил-картипе пахчине
Шăтăрнакпа çавăрнă.
Пысăк пĕлӳ тĕнчине
Хапха касса хăварнă.

Кӳршĕ ялти ачасем
Кунтах килсе пурăннă.
Учительсен çурчĕсен
Тăррисем те курăннă.

Кивĕ чиркӳ юнашар.
Унта клуб халь хăтланă.
Вăхăтпала танлашар
Тесе ял-йыш шутланă.

Вулавăшĕ те кунтах -
Çĕнĕ вăхăт, çĕн ăнлав.
Ун çинчен пуçларăм та
Кивĕ çемĕпе калав.

Шкул керменĕ çумĕпе
Лаша çулĕ тăсăлать.

Хăтлă çуртсен речĕпе
Çырманалла ăсанать.

Чăнкă çыран тĕпĕнче,
Лапра, касă пуçланать.
Çавă çуртсем тĕлĕнче
Çул пăрăнса çухалать.

Лаприкас тесех калать
Ăна кив ял халăхĕ.
Сăртран пăхсан хускалать
Чунра çемĕ хĕлĕхĕ.

Çав çурсенчен пĕринче
Ӳсет пĕчĕк Марине,
Кĕрсе ашшĕ килĕнчен
Çĕнĕ пурнăç аваăрне.

Хĕвел сăнлă питĕнче
Иксĕлми асам илем.
Пысăк, хăмăр куçĕнче
Ялкăшса тăрать хĕлхем.

Хура çӳçĕ пилĕкрен –
Хĕр пĕрчи вĕт, апăрша!
(Çăра çивтĕ ĕлĕкрен
Савăнтарнă чăваша.)

Тути çӳхе чуптума,
Чĕлхи япшар калаçма,
Алли çирĕп ĕç тума,
Сасси – вăйă пуçарма.

Ирех тăрать, çăвăнать,
Çуса тухать урайне.
Амăш курса савăнать,
Ăшшăн парать канашне.

Хăй тĕпелĕн кукринче
Салма яшки пĕçерет.
Хĕрĕ унăн умĕнче
Ăсталăхне ÿстерет.

Апат çисе тăрансан
Чашăк-тирĕк пуçтарать,
Çÿпĕ-çапă курăнсан
Тасатмашкăн пултарать.

Хăш чух вучах умĕнче
Çатма шăрши кăларать.
Шăрши кил-çурт тĕлĕнче
Урама та сарăлать.

Кушакпала çурине
Чашăк лартса çитерет.
Пушă чух пуканине
Çывăрттарса сиктерет.

Йăмăкĕпе шăллĕне
Йыт-качкаран хÿтĕлет.
Вĕсене хăй тĕллĕнех
Уçăлтарса çÿретет.

Канмалли кун амăшне
Кĕпе çума пулăшать.

Чирлĕрех асламăшне
Çăмăллатма тăрăшать.

Нинапа Улькка, Литюк,
Хирĕç ĕретри Люпук,
Верукпала Валянтюк,
Иккĕн, Петĕрпе Ванюк –
Çакă арçын ачасем,
Кӳршĕ-аршă хĕрĕсем –
Марине тантăшĕсем,
Пурте унăн тусĕсем.

Вĕсенчен çывăхраххи
Ялĕпе те урăх çук.
Пĕри – теприн хăраххи
Вăй выляса кулнă чух.

Ача-пăча сассипе
Урам тăрать янраса.
Пĕтĕм Лаприкассипе
Сасă çӳрет çаврăнса.

Çерем çинче кунсерен
Мечĕкпеле выляççĕ.
Пĕрне-пĕри лектерсен
Ахăлтатса кулаççĕ.

Çумăр хыççăн катана
Кăмпа татма çӳреççĕ.
Кĕтӳ ансан картана
Ĕне-сурăх кĕртеççĕ.

Пĕве ҫитнĕ пикесем
Каҫ-каҫ улах лараҫҫĕ.
Маринепе тусĕсем
Унта курма ҫитеҫҫĕ.
Чăлха ҫыхма, тĕрлеме
Марине те вĕренет.
Улах ларса ҫӳреме
Ҫул ҫитменни пĕтерет.

Хăйĕн ҫирĕп йĕркипе
Ҫу иртет те кĕр ҫитет.
Хĕл ҫĕре, черечĕпе,
Шурă шупăрпа витет.

Ҫĕнĕ ырлăх, ҫĕн кĕтрет
Ача-пăча тĕнчине
Ҫитнĕ майăн парнелет,
Хĕрхенмест хăй ĕнчине.

Ăшă кулă та шăй-шай
Тăвайкки ҫинче куллен.
Юр хĕвсе кĕрт хунă май
Ҫунашка туртса килен!

Ҫунашка тавраш ҫукки
Туртса килет тăпăрчăк.
Ку вăл – чаплашка пекки,
Якарах та тепĕр чух.

Тĕпĕ пăрлă пулнăран
Ярăнса анмашкăн шеп.
Ӳкĕн-тăрăн хушăран,
Кĕрчĕ – чăн ҫемҫе тӳшек.

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
Ч-41002

Юрлă-пăрлă урамран,
Шур упа пек, Марине
Алăка уçса аран
Хăпăнса кĕрет килне.

Уринчи çăматтисем
Шăнса ларнă шăк та шак!
Туртнă май çăм нускисем
Хывăнса юлаççĕ çак.

Ват асламăшĕ тăрать:
- Ай, тур-тур! – тесе кăна.
Хăй васкавлăн йыхăрать
Апата ларма ăна.

Кăтăклать пыра яшка,
Кăмакара ларнăскер.
Марине васка-васка
Пушатать чашка çаксскер.

3. Кунтикавра

Çĕнĕ пурнăç çутталла
Йыхăрать çĕр çыннине.
Аякри мĕнпур яла
Кăларать çĕн çул çине.

«Эпир чура мар текех,
Чура мар текех эпир!» -
Сăмаххи эмел пекех,
Сирĕлет авалхи чир.

Тěттěм халăх хушшине
Сарăлать эмел-хыпар.
Ăша хывать илтнине
Ача-пăча кăна мар.

Шур сухал та ку чухне
Аллине тытать Букварь.
Пикенсех ликбез ěçне
Кÿлěнет ял-йыш вăр-вар.

Ашшě-амăш Маринен
Ялти шкула пěтернě.
Ку çителěксěр иккен,
Малалла та вěреннě.

Пěлÿ çулě ашшěне
Чěмпěр шкулне çитернě.
Катнă пěлÿ тěшшине,
Кěç катса та пěтернě.

Кайран ятлă çын пулма
Кунтикава ярaççě.
Ачасене ăс пама
Хăйне шанса параççě.

Пурнăç çапла малалла
Çавăтса пырать пире.
Çамрăк кил-йыш çаплалла
Тымар ярать çěн çěре.

Чăваш ялě Кунтикав
Тăван килтен аякра.

НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
Ч-41002

Çавăнпа çук мар хускав
Тымар янă кил-çуртра.
«Çӳрен каска якалать,
Ларан каска мăкланать», -
Тесе ватти сăмахлать,
Пыра-киле лăпланать.

Çĕнĕ пурнăç, çĕн хускав
Пур çĕрте те вăй илет.
Чăваш ялĕ Кунтикав
Кĕç пурне те килĕшет.

Ялĕ – паллă ял пирте,
Урамĕсем тӳп-тӳрĕ.
Хресчен çынни уй-хирте
Йăрансене тĕп тӳрĕ.

Сĕве шывĕ юнашар,
Кавир пек, çемçе çерем.
Улăх-çаран сахал мар,
Выльăх-чĕрлĕх килсерен.

Тырă-пулă та юр-вар
Ытлă-çитлĕ пулнăран,
Паянпа кăна та мар,
Ыррине кĕтен ыран.

Аслă урам варринче
Шкул кĕтсе илет сана.
Лартнă хăй вăхăтĕнче
Иван Яковлев ăна.

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА Чувашской Республики

Хĕрлĕ чуллă ун стени
Курăнса ларать хитрен.
Кĕрсе курнă, ял хăни,
Эп унта хутран-ситрен.

Чăваш улăпĕ шкулта
Хăтлă пултăр тенĕ-тĕр,
Ял учительне унта
Пурăнмашкăн пур хваттер.

Тиххăн ывăлĕ Васлей
Вырнаçать çав кĕтесе.
Халăх тĕмсĕлнĕ телей
Майĕпен пырать çитсе.

Çĕнĕ пурнăç вăрлăхне
Вăл акать унта куллен.
Унăн тулăх çимĕçне
Курĕ малашне ку ен.

Çакă кĕске хушăра
Мĕн чул пĕрчĕ акăнчĕ,
Кашапа Кунтикавра
Тулăх çĕре сапăнчĕ. [7]

Пĕри куçĕ умĕнче
Тĕлкĕшсе тăрать пĕрмай.
Çĕнĕ проза уйĕнче
Тен, вăл ӳсĕ-ха самай.

Ячĕпех аса илер –
Ку Лявантти ывăлĕ,

Тимĕр [8]. Сăнĕпе чипер,
Кăвакарчăн кăмăлĕ.
Сăвă та калав таса
Чĕлхепе çырать сатур.
Тÿррипеле каласан –
Тур пани, чăнах та, пур.

Йÿçĕ Макçăмăн [9] алли
Пăхсан тÿрех сисĕнет.
Йĕркесенче саспалли
Шăрçа евĕр тирĕнет.

Алексей Максимыч пек,
Çавракан çырать пусса.
Урокра ларать тÿлек,
Тимлĕн ăс пĕрчи пухса.

Аллинче куран ялан –
Ир те, каç та – кĕнеке.
Тен, чăнах, çавăнпалан
Юратать вăл ирĕке.

Вăрăм янă сар çÿçне,
Пичĕ çутă та ĕлккен.
Тăхăнса çÿрет пуçне
Çулла улăм шĕлепке...

Çамрăк каччхайавăрах
Асăрхать вĕрентекен.
Ун сăмахĕ каярах
Йăлт тÿрре килет иккен.

Çĕнĕ сăмах калама
Çӳрет драма кружокне.
Ăна панă вылямa
Сатай ватă çын рольне. [10]

Çав ятпала кĕç ăна
Ялта пурте чĕнеççĕ.
Халĕ Садай çыравçа
Çĕршывĕпех пĕлеççĕ.

***

Пĕрреччен учителе
Хут ярать военкомат.
Унта палăртнă тĕле
Çийĕнчех çитес пулать.

Хĕрлĕ çар ретне кайма
Çитнĕ вăхăт, тухнă ят.
Чикĕре хурал тăма
Чыс та, тивĕç те хушать.

Хăй мăшăрне вăратма
Тăчĕ шуçăм киличчен.
Ăна çара ăсатма
Ашшĕ килнĕ килĕнчен.

Яланлăха колхоза
Панă урхамахĕпе
Килсе çитрĕ васкаса –
Лаши тарлă, йĕп-йĕпе.

Кĕреçе хура сухал
Çирĕп çӳрет Çĕр çинче.

- Сас-хурасăр ан çухал,
Тикĕс мар ку чух тĕнче, -
Ăсатса калать сăмах
Тиххăн иртсе тĕпеле.
Ывăлĕ ун чăн-чăнах
Гренадер пек темелле.

Паттăр, ăслă та йăваш
Тăрать ашшĕ умĕнче.
Ăсанать çара чăваш
Хăйĕн çĕнĕ килĕнчен.

Ачисене ыйхăран
Вăрататъ кĕç амăшĕ.
Чунне чул пек хăйăрать
Уйрăлу пуçламăшĕ.

Ашшĕ илчĕ пĕшкĕнсе
Маринене ытамне.
Мачча таран çĕклесе
Кĕскен хушрĕ сăмахне:

- Пысăк пул та маттур пул,
Итле, хĕрĕм, аннӳне.
Инçе выртать манăн çул,
Ан ман эп каланине...

Çапла ашшĕ килĕнчен
Вăрахлăха ăсанчĕ.
Ыр аслашшĕ нумайччен
Çула тухма юсанчĕ.

Маринене чи малтан
Йӑтса лартрӗ лав ҫине.
Арчапала чӑматан
Кирлӗ пулӗҫ хуҫине.

Ӑпӑр-тапӑр япала
Кӗчӗ пӗр урапанах.
Килнӗ ҫулпа каялла,
Ҫил пек, чупрӗ урхамах.

4. Таврӑнни

Ашшӗне Хӗрлӗ ҫара
Ӑсатса килсен киле
Вӑхӑт Кивӗ Улхашра
Шӑвӑнчӗ яланхилле.

Йышлӑ тантӑш та урам
Илӗртет Маринене,
Таврӑнать чупса ҫарран
Вӑйӑран тин каҫ енне.

Ҫу та иртрӗ, ҫитрӗ кӗр,
Каймалла ыран шкула.
Ыйӑх татӑлчӗ кӗҫӗр
Ҫакӑ савнӑҫа пула.

Ашшӗн кивӗ сумкине
Тупса пачӗ амӑшӗ.
Чупса пычӗ каҫ енне
Люпук, сывӑх тантӑшӗ.

Канашларĕç чылайччен –
Хут-кăранташ чикмелле,
Ирпе шкула кайиччен
Хатĕрленсе çитмелле.

Çĕнĕ тутăр, çĕн кĕпе
Çыхса-виçсе пăхмалла,
Çÿçе пурçăн лентепе
Çивĕтлесе çыхмалла.

Кам шутланă – пыр та кур! –
Çунат пулсан вĕçмелле.
Пурте хатĕр, пурте пур,
Ире кăна кĕтмелле.

Кĕте-кĕте ывăнса
Путнă тарăн ыйăха.
Амăшĕ ал çавăрсан
Пырса пăхрĕ çывăха.

Ачашласа вăрахчен
Вăл вăратрĕ пепкине.
Тен, курман ку таранччен
Чĕри çапла сикнине.

Выляса пуканелле
Ÿснĕ аслă хĕрача.
Пĕве çитнĕ темелле,
Çамрăк çулĕпе анчах.

Марине васка-васка
Сивĕ шывпа çăвăнчĕ.

Çурăмĕ хыçне сумка
Çакса шкула ăсанчĕ.

Асламăшпе аслашшĕ
Савăнаççĕ чĕререн,
Ăшшăн пăхса юлаççĕ
Тĕпелти чÿречерен.

***

Çав кунтанпа Маринен
Çĕнĕ пурнăç пуçланчĕ.
Сумка çакса кунсерен
Шкула чупса ăсанчĕ.

Çĕнĕ сăмах, саспалли
Тĕрĕс çырма вĕренет.
Шутламалли-çырмалли
Ĕç-пуç патне иленет.

Саспаллипе сыпăкран
Чылай сăмах вуланать.
Такам вăрттăн хăлхаран
Пăшăлтатнăн туйăнать.

Тĕлĕнмелле мар-и-ха
Çак асамлăх тупсăмĕ?
Ăс пĕрчи яланлăха
Пыра-киле хутшăнĕ.

Килте амăшĕ ялан
Аса илет ашшĕне.
- Епле савнăччĕ паян
Саншăн, - терĕ вăл хĕрне.

Сасăпа вулать Букварь
Такăнмасăр Марине.
Амăшĕ ахальтен мар
Çыру тытнă аллине.

Питĕнчен хавасах мар,
Калаçать чунтан-вартан:
- Лар-ха, хĕрĕм, юнашар,
Çыру килчĕ аçунтан.

Çупăрларĕ те хĕрне
Лар, итле тесе шăпах
Кĕç вуларĕ çырăвне –
Васкамасăр, сасăпах.

Асламăшпе аслашшĕ
Кунтах шăппăн лараççĕ.
Çĕнĕ хыпар пĕлесшĕн
Сывламасăр итлеççĕ.

5. Ашшĕ çырăвĕ

«Укахви мăшăрăма.
Атте-анне, Марине!
Пĕлтеретĕп таврăнма
Çулăм сывăх маррине.

Хĕвеланăç чиккинче
Эп тăратăп хуралта.
Юнашарах – кай тĕнче,
Тулăх шывлă çыранта.

Лару-тăру лăпкă мар,
Шавкка сасси илтĕнет.
Тĕлкĕшет унта кăвар -
Пире ку та сисĕнет.

Хура вăйсем куçкĕрет
Хаяр кавар тăваççĕ.
Талăкĕпех чикĕре
Шăлĕсене хăйраççĕ.

Пытармасăр каласан,
Эпир маххă памăпăр,
Çич ют килсе тапăнсан
Шăлĕсене катăпăр.

Миккалай [11] шăллупала
Ăнсăртран тĕл пултăмăр.
Ĕнер вăрах унпала
Сăмахласа лартăмăр.

Унпала çине-çине
Пысăк салам яратпăр.
Кĕркунне тăван ене
Таврăнасса шанатпăр...»

Çак сăмахсем хыçĕнче –
Шултăра саспаллисем,
Маринене ятĕнчен
Хушса çырнă йĕркесем:

«Пул маттур, аван вĕрен,
Килте пулăш аннӳне.

Хисепле чун-чĕререн
Асласу-асаннӳне.
Куккупала ацуна
Аса ил, ан кай манса.
Саламлатпăр халь сана
Çапла пуласса шанса».

(Куккăшĕ ун, Миккалай,
Аякри ялти шкулта
Тăрăшнă. Ят тухнă май
Тăнă хĕсметре çарта.)

6. Вăрçă

Çуллахи çĕртме тĕлне
Районта иртет «бега».
(Вырăссем акатуйне
Çаплалла калаççĕ-ха.)

Ялĕ Аслă Нагатка
Халăхпа тулать çав кун.
Уяв шавĕ аякка
Саланать хум хыççăн хум.

Чи инçетри ялсенчен
Пухăнса килет таппи.
Урам тăрăх вăрахчен
Кĕрлет кӳми-урапи.

Чăнкăр-чăнкăр! шăнкăрав
Çакса янă пĕкĕрен.

Туй кӳмиех тейӗн ҫав
Утне эрешленӗрен.

Лентесемпе чечексем
Ҫакса ҫыхнӑ ҫилхӗрен.
Лавӗ ҫине ҫамрӑксем
Кӗрсе ларнӑ йӗркерен.

Ешӗл хурӑн ҫулҫине
Тата-тата тултарнӑ.
Юрӑ-кӗвӗ ҫул ҫине
Илсе тухма пултарнӑ.

Ҫутӑ тенкӗ, шур саппун
Ҫакса хӗрсем тумланнӑ.
Ырӑ туйӑм ҫутӑ кун
Чӗрисенче вӑраннӑ.

«Атьӑр, хӗрсем, «бегана»
Тышлӑ ҫине тиенсе», -
Шӑрантарнӑ пӗр кана
Юррисене ҫӗкленсе.

Каяймасӑр юлнисем
Ал сулаҫҫӗ ӑмсанса.
Хыҫҫӑн пӗчӗк ачасем
Чупнӑ тусан кӑларса.

... Ёнтӗ иккӗмӗш класа
Кӑҫал куҫрӗ Марине.
Ӑшӑ сӑмах каласа
Чӗнчӗ амӑшӗ хӗрне.

Укахви аппа ăна
Савăнтарма шутларĕ.
- Атя ыран «бегана», -
Тесе сăмах пуçларĕ.

Кÿршĕ Праски инкепе
Хатĕрленчĕ вăл çула...
Çитрĕ хăй черечĕпе
Хĕрĕх пĕрремĕш çулла.

Шăлтăр-шалтăр урапа
Çитсе тăчĕ çурт умне.
Савăнăçлă юрăпа
Лавçă лартрĕ хăй çумне.

Калăн, аслă Мускава
Кайма тухнă хĕрĕнсе.
Марине çак хускава
Пăхса пычĕ тĕлĕнсе.

Çулăн икĕ енĕпе
Тырă-пулă ешерет,
Хĕвел хăйĕн ăшшипе
Пĕрчĕсене пĕçерет.

Тăрисем вăраннă ав
Ешĕл тырă уйĕнче.
Çÿл тÿпене шăнкăрав
Çакса тухнăн туйăнчĕ.

Шăлтăртатать урапа
Сар тусанлă çулпала,

Пырса кӗчӗҫ юрӑпа
Ентешсем хитре яла.

Вырӑс ялӗ Нагатка
Хула евӗр туйӑнать.
Ҫулӗ аслӑ та яка,
Йӑлӑм енне туртӑнать.

... Халӑх, халӑх хӗвӗшет
Иртенпех ипподромра,
Килсе ҫитнӗ те вӗрет
Тейӗн пысӑк хуранра.

Карусель ҫине ларса
Савӑнаҫҫӗ ҫамрӑксем.
Ҫавраҫил пек ҫаврӑнса
Ҫуталаҫҫӗ сӑнӗсем.

Аяккарах, ҫеремре
Суту-илӳ речӗсем.
Ват ҫынсен те ҫирӗмре
Туйӑнаҫҫӗ чунӗсем.

Урхамахсем кӗҫенсе
Старта килсе ҫитеҫҫӗ.
Куракансем киленсе
Чан ҫапасса кӗтеҫҫӗ.

Маринене амӑшӗ
Ситро илсе ӗҫтерчӗ.
Кӗтмен ҫӗртен тахӑшӗ:
- Вӑрҫӑ! – тесе пӗлтерчӗ.

Тăвăл евĕр шай та çуй
Кĕç çĕкленчĕ таврара.
Çапла сÿнчĕ акатуй
Çĕр пек пысăк хускавра.

Хирĕç пулчĕç мал енче
Кĕçех салтак ачисем.
Янăрарĕç вăрахчен
Вĕсен хурлă юррисем.

7. Колхоз хирĕнче

Гитлер çарĕ аçтаха
Евĕр кĕчĕ тапăнса.
Вĕçĕ-хĕрри ăçта-ха?
Кам парайĕ каласа?

Хуласемпе ялсене
Бомба тăкса аркатать.
Ним айăпсăр çынсене
Инкек-синкек кăтартать.

Кĕтмен-çĕртен пулнипе
Чакса пырать Хĕрлĕ çар.
Кунĕпе те çĕрĕпе
Сарăлсах пырать пушар.

Илет салтак тинкине
Вăрçăн тертлĕ çухрăмĕ.
Аякри чăваш ялне
Çитет унăн ахрăмĕ.

Пултараймĕç-шим вара
Сирсе яма усала?
Çын неушлĕ чурара
Ĕмĕр хĕн-хур курмалла?

Килĕренех арçынсем
Ăсанаççĕ салтака.
Вĕсен хурлă юррисем
Саланаççĕ аякка.

Укахви сĕм çĕрлеччен
Хирти ĕçре вăй хурать.
Чикĕри мăшăрĕнчен
Çук та çук тек сас-хура.

Тен, вăл вилнĕ. Тен, сывах.
Тен, май çук çыру çырма
Шанчăк пур-ха çав-çавах,
Вăхăт çук çунса ларма.

Ял-йыш ĕçе пуçăннă
Тырă çинче тăрмăшать.
Марине те шуçăмлах
Хăй амăшне пулăшать.

Жнейка хыççăн вăш кăна
Кĕлте çыхса ĕлкĕрет.
Куллен ÿссе йышланать
Йĕтем çинче ĕçкĕрĕт.

Тепĕр чухне çурлапа
Тырă вырса ывăнать.

Килне ăшă туйăмпа
Çунатланса таврăнать.

Хирте халăх умĕнче
Бригадир мухтанăран
Хĕрĕн хÿхĕм питĕнче
Кулă çиçнине куран.

Фронта йышлă урхамах
Салтак пекех ăсаннă,
Лаша ферми çав çулах
Çурри ытла пушаннă.

Килти хăла ĕнине
Кÿлсе тухрĕ аслашшĕ,
Кĕç çÿрерĕç кĕлтене
Маринепе иккĕшĕ.

Йывăр килчĕ пулĕ çав
Çавăн чухне старике:
Вырăнпалах выртрĕ ав,
Сурчĕ кăкăр-пилĕкĕ.

Асламăшĕ тăрăшса
Курăкпала сиплерĕ.
Старик выртрĕ йынăшса,
Ансат эмел çитмерĕ.

Вилĕм чирĕ пулчĕ пуль -
Çĕре кĕчĕ кĕр енне.
Йывăр килчĕ çавă çул
Туслă, çамрăк çемьене.

Шакла хăмăллă хирте
Кĕç вĕрерĕ çĕнĕ ĕç.
Шкулти ачасем пурте
Пучах пухма çӳререç.

Халăх тухать йĕтеме,
Молотилка сас парать.
Кĕлте йăтма-сĕтĕрме
Яш-кĕрĕме пуçтарать.

Маринепе тусĕсем
Ку ĕçре те чи малта.
Хура кĕр çитсен вĕсем
Пухăнчĕç пĕрле шкулта.

Сивĕ килчĕ-çке сĕре
Хĕрĕх пĕрремĕш хĕлле.
Çурçĕрти пек сивĕре
Хирсенче ĕçлемелле.

Ĕçкĕртсем патне тухса
Çаплах авăн çапмалла.
Юлнă тыр-пула пухса
Фронта леçнĕ çаплалла.

Кирлĕ пулнă тыр-пулли
Кăна мар, паллах, фронта.
Кирлĕ ăшă тумтиррĕ
Салтаксем валли унта.

Чăлха, алсиш çĕрĕпе
Çыхса панă килĕрен.

Çак ĕçе те ялĕпе
Туса пынă чĕререн.

Çăматăсем, кĕрĕксем
Панă йышлă çĕлесе,
Хĕç-пăшаллă салтаксем
Шиксĕр çапăçчăр тесе.
Ачасем те айккинче
Çавăн чух юлман тăрса.
Кивĕ Улхаш шкулĕнче
Сыхнă урокран юлса.

Куллен-кунах кĕрт ашса
Шкула чупрĕ Марине.
Питĕ тимлĕ, тăрăшса
Хатĕрлерĕ парнине.

Тĕслĕ пурçăн çиппеле
Шурă тутăр тĕрлерĕ.
Сакă кирлĕ ĕçпеле
Çĕр иртнине сисмерĕ.

«Тăшман тăтăр чĕтресе,
Тавăр, салтак, хытăрах», -
Тесе çырчĕ тĕрлесе
Кăвар пек хĕрӳ сăмах.

***

Питĕ пычĕ вăраха
Юнлă вăрçă Çĕр синче.
Çав суран яланлăха
Юлчĕ чĕре тĕпĕнче.

Кашни кунӗ, талăкӗ
Йывăрпала ăсанчӗ.
Хаяр вăрçă тамăкӗ
Ӗмӗр халăх асӗнче.

Марине ачалăхӗ
Иртсе кайрӗ çавăн чух.
Хӗрӳ пурнăç чăнлăхӗ
Нихăçан та сӳнес çук.
Питӗ кирлӗ тапхăрта
Мăннисене пулăшрӗ.
Йышра пычӗ чи малта,
Май пур таран тăрăшрӗ.

Çур ăшши килсе çитсен
Вăл шăварчӗ купăста.
Ӗçкунӗпе тӳлесен
Кил-йыш курчӗ тупăш та.

Çулла вир ани çинче
Çумкурăкне çумларӗ.
Хушамачӗ тӗлӗнче
Пӗр кун сикни пулмарӗ.

Утă çулчӗ çавапа
Чун-чӗререн савăнса.
Пули-пулми сăлтавпа
Килте ларман сарăлса.

Хирте ӗççи тытăнсан
Унта тухнă çурлапа.
Тантăшсемпе пухăнсан
Канма ларнă юрăпа.

Килсе ҫитсен кун ҫути
Тухнă тырă пуссине.
- Сакăр соттăха ҫити
Паян вырчĕ Марине.

Унран тĕслĕх илмелле, -
Пăхса ҫаврăнсассăн хир
Йышра пурте илтмелле
Пĕлтеретчĕ бригадир.

Ҫапла иртрĕҫ шавласа
Вăрҫă-харҫă ҫулĕсем.
Вĕсемпеле тавлашса
Вĕрчĕҫ ĕмĕр ҫилĕсем.

8. Медаль

Пĕтрĕ вăрҫă. Ҫĕнтерӳ
Ҫиҫрĕ ҫутă хĕвелле.
Ăна ҫамрăк ҫĕн ăру
Хакламашкăн пĕлмелле.

Салтаксем тăван яла
Таврăнмашкăн пуҫларĕҫ.
Пĕр ĕҫ тытса ик алла
Мирлĕ пурнăҫ ăсларĕҫ.

Чылайăшĕ вăрҫăран
Сусăрланса таврăннă.
Ыр-сыв юлнă ăнсăртран,
Салтак ĕҫшĕн ăвăннă.

Орденсемпе медальсем
Кăкăри çинче çиçеççĕ.
Савăннипе килтисем
Йĕрсе кĕтсе илеççĕ.

Вăрçă хирне юлнисем
Килĕсене килеймĕç,
Амăшĕсем, мăшрисем
Текех кĕтсе илеймĕç.

Çавăнпала хӳхлесе
Вĕри куççуль тăкаççĕ.
Тĕлĕкре çеç тăлăхсен
Куçĕ умне тухаççĕ.

Маринесен, пĕр енчен
Кĕтмен çĕртен темелле,
Çыру килчĕ ашшĕнчен,
Кĕçех киле килмелле.

Ĕнтĕ ăна маларах
Пĕтнех пулĕ тенĕччĕ.
Кунран-кунах ытларах
Хуйхă-суйхă тиенчĕ.

Ик çул иртрĕ, виççĕ те –
Хыпар-хăнар пулмарĕ.
Пăлханса кĕте-кĕте
Асăнман кун юлмарĕ.

Сӳнтермерĕç шанчăка
Амăшĕпе арăмĕ.

Кĕç шаккарĕ кантăка
Салтак шăпин ахрăмĕ.

Пысăк çухату тўссе
Чакнă пирĕн Хĕрлĕ çар.
Салтаксене йĕрлесе
Вилĕм пынă юнашар.

Кирпонос [12] çар чаçĕнче
Кĕнĕ вилĕмлĕ вăрçа.
Кейў хули патĕнче
Тăшман илнĕ çавăрса.
Çав синкерлĕ кунсенче
Асапланнă ункăра.
Ун шăпи куннехинче
Пулнă йывăр та кăра.

Кĕçех лекнĕ тыткăна.
Лагерьти чĕр тамăкра
Çын тўсмен мĕскер кăна!
Çук, çаплах пулман чура!

Ку вăл - урăх тема-çке,
Хăй трагеди е роман.
Çавăн йышши кĕнеке
Чăннипех те пур-ха ман.

Кăштах çамрăкрах чухне,
Кăлăк чăххи пек ларса,
Чăваш «одиссейине»
Çырнăччĕ сăвăласа.

Вĕçĕ ун питех ансат:
Тамăкран тухсан татах
Аллине пăшал тытса
Салтак çитнĕ Берлинах.

Кĕçех таврăннă килне
Пĕр хĕвеллĕ ирхине.
Çĕклесе Маринене
Ăшшăн илнĕ ытамне.

Сунна кăкăрĕ çинче
Хĕвелле çиçсе медаль.
Хăй кайсан та килĕнче
Упранать медалĕ халь.
... Çав çул пысăк пухура
Ĕçченсене чысларĕç.
Чаплă лару-тăрура
Тав сăмахĕ каларĕç.

Кам колхозăн уйĕнче
Çĕнтерĕве туптанă,
Çавăн кăкăрĕ çинче
Орден-медаль çуталнă.

Çавăн чух медаль хутне
Марине те тивĕçрĕ.
Вăтаннипе хăй питне
Пытармашкăн тăрăшрĕ.

Кам ĕçре, кам вăрçăра –
Çÿремен чап шыраса.
Ик медаль пĕр хуранран
Тухнă мар-и шăранса?

Ҫакӑ ансат чӑнлӑха
Манас марччӗ ӳлӗмрен,
Европӑри халӑха
Вӑл хӑтарчӗ вилӗмрен.

9. Поэт ҫурални

Кӳршӗ ялти Хӗветӗр
Кив Улхашра вӗренет,
Ун амӑшӗн темӗнтӗр
Ӑна ҫын тӑвас килет.

Шкула кунсерен ҫуран
Пилӗк ҫухрӑм утмалла.
Пашалу татки, уйран
Чиксе ҫула тухмалла.

Маларах сумка ҫакса
Чупаканӗ йышлӑччӗ.
Ҫитнӗ хыҫҫӑн йӑлӑхса
Йыш самаях юхӑнчӗ.

Ҫемьене пулӑшакан
Кирлӗ ӗнтӗ кашнине.
Сахал мар ача шкултан
Юлчӗ вӑрҫӑ ҫулхине.

Иккӗн-виҫҫӗн ӑс илсе
Ӳсрӗҫ, чи тӳсӗмлисем,
Кӗрӗк, ҫӑпата ҫӗтсе
Вӗренме ҫӳрекенсем.

Хĕветĕре килĕшет
Тăван сăмах асамĕ.
Шĕл-кăвар пек тĕлкĕшет -
Кам ун вăйне ăмсанмĕ!

Нарспи ятлă хĕр çинчен
Вăл пуçласа вуларĕ.
Ăна вĕçне çитиччен
Каламашкăн пултарĕ.

Ват учитель [13] урокне
Итленĕ чух шăп ларать:
Вăл поэма авторне,
Иванова астăвать.

Çакă иртнĕ ĕмĕрте
Пулнă, юлнă асĕнче.
Ача чухне Чĕмпĕрте
Ларнă ун урокĕнче.

Вăл хушнипе пĕрреччен
Калав пекки хайланă.
Поэт хăй Букварĕнче
Усă курма шутланă.

Кăнна Кушки шăп кăна
Тăван ялĕ пулнă-мĕн,
Иван Яккăльччă ăна
«Внучка» тесе чĕннĕ-мĕн.

Класс шăп ларчĕ тăнласа,
Чĕрĕ сăмах тыткăнлать.

Ик улăпа чăнласа
Куçпа курнăн туйăнать.

Ват учитель пĕрреччен
Кружок пирки шахвăртрĕ.
Ача-пăча чунĕнче
Çĕнĕ туйăм вăратрĕ.

Кружок тесен класĕпех
Кăмăлларĕç çырăнма.
Йăтса кĕчĕ, кирпĕч пек,
Кĕнекине вулама.

- Пушкин çырнă юмаха
Малтанласа вулăпăр.
Ку чухнехи чăнлăха
Пыра-киле чухлăпăр.
Аслă поэт пултарнă
Чăвашла та çаптарма.
Ак мĕн çырса хăварнă,
Ăста пулнă, аптраман...

Çапла вăлтса пуçларĕ
Ват учитель сăмахне.
Куçлăх витĕр куçларĕ
Вулас умĕн юмахне.

«Кăвак тинĕс хĕрринче
Юман ларнă кашласа,
Кушак аçи ун тавра
Тек çÿренĕ явăнса...»

Чылай ларчĕ Хĕветĕр
Сывламасăр тăнласа.
Мĕн илтнипе çавхатер
Тĕлĕнсе те савăнса.

Çук, поэт хăй мар иккен
Çырма пĕлнĕ чăвашла.
Куçарса пырать ĕлккен
Хăй учитель экспромтла.

Пит ансат, ăнланмалла
Шăранаççĕ йĕркесем.
Ĕмĕр асра юлмалла
Халăхра ун пеккисем.

Апла ма тытăнас мар
Çавнашкал çырса пăхма?
Чăвашла та вут-кăвар
Майĕ пур пулсан сапма?
Чĕлхи, шыв пек, тап-тасан
Сарăлса юхать пулсан
Шанчăку çук мар-çке сан
Çав шыва пĕлсе ăссан...

Çĕнĕ туйăм, çĕн тĕнче
Яш куçĕнче уçăлчĕ.
Маринесен класĕнче
Çĕнĕ поэт çуралчĕ.

10. Юрату

И-юрату, юрату,
Çиçĕм пекех хăвату.
Çиçĕм çиçет те – пĕтет,
Юрату ĕмĕр çиçет.
(Халăх юрринчен.)

Шăп Хĕветĕр тĕлĕнче
Марине парти ларать.
Хĕр яланах умĕнче –
Сăвă çырма вăй парать.

Мăшăр çивтĕ пилĕкрен,
Çыхнă пурçăн лентепе.
Çивти таса кирĕкрен
Супăньпеле çунипе.

Кăвак сатин кĕпине
Утюгпала якатнă.
Тикĕс шăлсен каштине
Лайăх шăлса тасатнă.

Çўл кĕлеллĕ калушпа
Ярăнса çўрет утса.
Ăшă, çутă кулăпа
Чун-чĕрене хăпартса.

Икĕ куçĕ шăп кăна
Ик кăвар пек ялкăшать.
«Нарспи» авторĕ ăна
Курса çырнăн туйăнать.

Хутран-ситрен çаврăнса
Пăхать каччă еннелле.
Каять каччă савăнса,
Уяври пек темелле.

Ку е тепĕр сăмаха
Мĕнле тĕрĕс çырмалла?
Хут-тетрадь самантлăха
Çырса илме памалла.

Ялан хавас Хĕветĕр
Маринене пулăшма.
Тепĕр чухне пулать-тĕр
Пулăшăвĕ кулăшла.

Хăй те тумхах çул çинче
Чылай чухне такăнать.
Унăн çамрăк чĕринче
Туйăм тулса тăкăнать.

Анчах çавă туйăма
Хĕре мĕнле пĕлтерес?
Асапланса пурăнма
Епле вăй-хал çитерес?

Каччă ăшри сулăмне
Сÿнтермешкĕн пĕлмерĕ,
Варти хĕрÿ туйăмне
Шур хут çине тĕрлерĕ.

Хĕветĕр çырăвĕ
«Савнă тусăм Марине,

Сана çапла чĕнем-и?
Чун-чĕререн пĕр-пĕрне
Юратмашкăн сĕнем-и?

Ан кул манăн сĕнӳрен,
Çак сăмахран, Марине.
Эп çуралтăм çĕнĕрен
Сана курнă кунхине.

Манăн çамрăк чунăма
Çавăнтанпах лăпкă мар,
Пушар евĕр çулăма
Çаврăнать шалти кăвар.

Çав пушара сӳнтерме
Пулăш мана, айвана.
Çапла сипле чĕреме,
Шанас килет авана.

Ир те, каç та ахаль мар
Сăну куçăм умĕнче.
Санпа чухне чун патвар,
Сансăр – хĕсĕк çут тĕнче.

Анчах сана кун çинчен
Хăяймарăм калама.
Йышăн – такам сисиччен –
Сăвăланă салама.

Вуласан – çурса пăрах,
Никама та ан кала.
Ан кĕттер кăна вăрах,
Çырупала хуравла.

Мĕн çырас-ха малалла?
Кам çырнине пĕлетĕр.
Çырса пĕтрĕ пулмалла.
Пулас тусу – Хĕветĕр».

Çапла сырчĕ çырăвне
Çĕнĕ поэт хумханса.
Халĕ ĕнтĕ çырнине
Ун ямалла ăсатса.

Хут таткине хĕстерсе,
Çунат евĕр хуçлатрĕ.
Маринене систерсе
Куçран пăхса ывăтрĕ.

Анчах мĕн ку? Лайăхрах
Памаллаччĕ аллине...
Вĕçе пĕлмен кайăкла
Çыру ÿкрĕ урайне.

Кĕтмен çĕртен тахăшĕ
Ярса илчĕ аллипе,
Леш партăри тантăшĕ,
Сăхă кайăк чĕрнипе.

Çапла вăрттăн юрату
Пĕтĕм класа саланчĕ.
Чун-чĕрери ырату
Калама çук вăйланчĕ.

11. Сывпуллашу

Хĕвел тухса сарăлсан
Хура пĕлĕт саланчĕ.
Хăвăрт çитрĕ çывхарса
Сыпуллашу саманчĕ.

Шкул çулĕсем кĕрлесе
Иртсе кайрĕç ялана.
Вĕренсе пĕтернисем
Тытрĕç кивĕ йăлана.

Шкулăн пысăк залĕнче
Юрă-кĕвĕ янăрать.
Ача-пăча классенчен
Килне канма ăсанать.

Кĕçĕннисем савăнса
Аслă класа куçаççĕ,
Малашлăха ăнтăлса
Куçĕсене уçаççĕ.

Аслисемпе хурланса
Сывпуллашать кивĕ шкул.
Вĕсен умне сарăлса
Тухса выртать анлă çул.

Çав сарлака çулпала
Вĕсен уйрăм утмалла.
Туссене çавăнпала
Тунсăх пуснă пулмалла.

Эрлĕкпеле савăнăç
Хутăш килет çаплалла.
Мĕнех... Кĕтрет-пурăнăç
Çапла кăткăс япала.

Кивĕ Улхаш шкулĕнче
Сывпуллашу уявĕ,
Кил-картинче, классенче
Ача-пăча шăв-шавĕ.

...Ват учитель уявра
Ăслă сăмах каларĕ.
Кашни çамрăка ятран
Асăнмасăр юлмарĕ.

Аллине пичетлĕ хут
Вăл тыттарчĕ хумханса.
Хĕветĕр пĕрремĕш хут
Пачĕ сăвă вуласа.

Ăна çырчĕ вăл ĕнер
Çывăрмасăр çĕрĕпе.
Пулса тухрĕ пек чипер,
Шур хут çинчи тĕрĕ пек.

Халалларĕ вăл ăна
Класри тус-тантăшсене.
Ӳстерме çак ушкăна
Вăйне хунă çынсене.

Ват учитель хăй ятне
Те илтмерĕ, те илтрĕ...

Шурă тутăрпа куçне
Шăлса илсе типĕтрĕ.

Кунтах итлет Марине
Ларса парта хушшинче.
Мĕн çитмест ун чĕрине?
Мĕн шутлать-ши ăшĕнче?

Юлашкинчен ыр сунса
Ват учитель калаçрĕ.
Пăлханнине пытарса
Хăвармашкăн тăрăшрĕ.

Хĕветĕре ырласа
Пĕчĕк канверт тыттарчĕ.
Урамри пек, шавласа
Кĕçех уяв саланчĕ.

***

Килне çитрĕ Хĕветĕр
Калама çук пăлханса.
Сăлтавĕ пур - пĕлетĕр –
Йăлтах кайăн çухалса.

Вăл кăтартрĕ канвертне
Килте пĕччен амăшне.
Ыталарĕç пĕр-пĕрне,
Уçса пăхрĕç те ăшне.

Аллă тенкĕ хут укçа,
Ку пĕрре те сахал мар.
Пурлă-çуклă пурнăçа
Йӳнеçтерчĕ «гонорар».

Мĕн тăвас халь унпалан?
Амăшĕ ăс пачĕ çак:
- Кайса ил-ха лавккаран
Ху валли сăран пушмак.

Чупса кайрĕ лавккана
Ывăлĕ пушмак тесен.
- Пысăкрах та – кăшт кăна,
Пулĕ чух пăртак ӳссен, –

Çапла пачĕ пысăк хак
Амăшĕ япалине.
Тăхăнчĕ сăран пушмак
Хĕветĕр ик урине.

Çак кунтан сăпатине
Салтса хучĕ чăлана.
Аякри чăваш ялне
Çĕнни кĕчĕ йăлана.

12. Аллă çултан

(Эпилог)

Унтанпа шăп аллă çул
Шыв пек юхса кайрĕ.
Аллă çул вăл – пĕлнĕ пул! –
Этем ĕмри мар-и?

Аванни те пур унта,
Начарри те пулĕ...
Килчĕ йывăр вăхăта
Ахаль çын кун-çулĕ.

Чипер каччă Хĕветĕр
Вăтам шкул пĕтерчĕ.
Малалла ун çавхатер
Ӳссех пычĕ терчĕ.

Вĕренсе пĕтериччен
Çĕре кĕчĕ амăш.
Юлчĕ шăллĕпе пĕччен,
Кураймарĕ канăç.

Сараймарĕ çунатне
Каччă çакăн хыççăн,
Кӳлĕнчĕ хаçат ĕçне,
Калăн, ача пуççăн.

Районти редакцире
Ыр Садай ларатчĕ.
Хаçатне вăл пĕр-пĕччен
Кăларса тăратчĕ.

Хĕветĕр сăввисене
Пичете яратчĕ.
Аякри ял ачине
Канашсем паратчĕ.

Шăллĕ евĕр вăл унпа
Калаçатчĕ ăшшăн.
Хăй ларатчĕ романпа,
Тĕплĕн калăпласшăн.

Романĕпе «Атăлра»
Сасă пачĕ уççăн.
Хăй те ват Шупашкара
Куçрĕ çакăн хыççăн.

Эстафета патакне
Шăллĕне тыттарчĕ.
Хăй кайсан Чăваш Ене
Ырă ят хăварчĕ.

Халь Хĕветĕр малалла
Унăн ĕçне тăсрĕ.
Пĕр ĕç тесе ик алла
Йывăрлăхсем тӳсрĕ.

Çапах юлчĕ упранса
Ыр-тĕкел те сывă.

Çырчĕ хум пек тапранса
Сăвă хыççăн сăвă.

Ыйăх татса çырнине
«Ялава» та янă.
Унăн çав поэмине,
Тен, эсир вуланă...

Анчах чăн-чăн поэта
Каччă тухаймарĕ.
Ёмĕтри Шупашкарта
Инкек тӳсрĕ мар-и?

Тупăнчĕ шуйттан чури
Ун тĕлне сасартăк.
Пулчĕ вăл элек хурри,
Ятсăр-сумсăр, катăк.

Кун çинчен калас сăмах
Кичемрех те пулĕ.
Чурăс çын чунпа чăлах,
Çынна туслăх çăлĕ.

Вăхăт-тухтăр темĕнле
Сурана та сиплĕ.
Этем чысне пĕлмелле
Упрамашкăн тĕплĕ.

Сивĕре те кӳтнĕ-тĕр,
Тӳснĕ каçăн-ирĕн.
Туса пычĕ Хĕветĕр
Пĕчĕк ĕçне тӳррĕн.

Инçете Маринене
Хурлăхлăн ăсатрĕ.
Тĕл пулман тек пĕр-пĕрне,
Çул-йĕрне çухатрĕ.
Тĕлĕкре курса кăна
Шутсăр асапланчĕ.
Улталаймăн шăпана -
Ĕнтĕ сÿнчĕ шанчăк.

Пурăнчĕ пĕччен хусах,
Ирĕкре аванччĕ.
Йăлăхсассăн туй тусах
Ват хусах авланчĕ.

Çемье çавăрма тесен
Тата мĕскер кирлĕ?
Ача-пăча ÿстерсе
Пурăнчĕçĕ мирлĕ.

Çĕн патша - Хрущев генсек
Çĕнĕ йĕрке турĕ.
Пуçлăх-тÿресем кĕçех
Йышлăн тухса шурĕç.

Хулари чул çуртсене
Суйласа тĕпленчĕç.
Ялсенчи киввисене
Кама кирлĕ – сĕнчĕç.

Çавăн чух Хĕветĕре
Пушă хваттер лекрĕ.
Кил-йыш хушăннă çĕре
Ун черечĕ çитрĕ.

Çурчĕ кивĕскер кăна,
Уншăн та тав турĕ
Халь Хĕветĕр шăпана,
Çулпа утрĕ тӳрĕ.
Тӳресем те вăхăтра
Унпала çырлахнă.
Хăлтăр-хăлтăр кив çуртра
Ачасем çуратнă.

Вăл хăйне çав самантра
Чи телейлĕ туйрĕ.
Чăннипех те çав шутра
Чунĕпеле пуйрĕ.

Пĕлĕт çӳллĕ тӳпере
Шуса иртнĕ евĕр,
Сисĕнмесĕрех, эре,
Иртрĕ самрăк ĕмĕр.

Ачи-пăчи çитĕнсе
Тĕнчене саланчĕ.
Мăкпа ларчĕ витĕнчĕ
Хĕветĕр таланчĕ.

Аякра мăнукĕсем
Йышлăланса пычĕç.
Ваттисене чир-чĕрсем
Çатăрласа илчĕç.

Тĕпе юлнă аслă хĕр
Вăхăтсăр ăсанчĕ.
Мăшăрĕпе Хĕветĕр
Иккĕш тăрса юлчĕç.

Килти икĕ мăнукне
Кĕçĕн хĕрĕ илчĕ.
Хуйхă-суйхă мăшăрне
Ураран ÿкерчĕ.
Часах «тĕтĕмсĕр яла»
Мăшăрĕ ăсанчĕ.
Куççульне шăла-шăла
Хĕветĕр асапланчĕ.

Çемье çеç-и, мĕн Çĕршыв
Туххăмах арканчĕ.
Пуçна ус та çĕлĕк хыв,
Кив ĕмĕр поэчĕ!

Хуйхă-суйхă çыхлансан
Самаях вăл хухрĕ.
Чылай пĕччен пурăнсан
Хĕветĕр çула тухрĕ.

Чĕнчĕ ăна Шупашкар.
Инçе çулĕ ăнчĕ.
Тусĕсем унта çук мар,
Манайман-ха тăнчă.

Çавăн чух Маринене
Ăнсăртран тĕл пулчĕ.
Юмахри пек, ун чухне
Сар хĕвеллĕ кунччĕ.

Курчĕ: унăн умĕнче
Тулли питлĕ дама.
Çулĕпе те чăннинчен
Ытла тесе памăн.

Педикюр та маникюр –
Ку чухнехи мода.
Хула майри сăнĕ пур,
Пичĕ-куçĕ çутă.
Икĕ вăрăм çивĕтне
Марине кастарнă,
Кăтралатнă шур çӳçне
Кĕскетсе хăварнă.

Акăш-макăш макияж,
Тумĕ-юмĕ – супер.
Хĕветĕр сывларĕ хаш!
Йăл кулайрĕ пурпĕр.

Ĕненмесĕр курнине
Куçĕнчен тинкерчĕ.
Çав самантра Марине
Шуçăм пек чиперччĕ.

Пур ун, юлнă сыхланса
Хĕр чухнехи сăнĕ.
Чунĕ çутă та таса,
Туйăмĕсем – çĕнĕ.

Çав кун иккĕш кафере
Шăкăл-шăкăл ларчĕç.
Тĕлпулу чун-чĕрере
Тарăн йĕр хăварчĕ.

... Вăл Ульяновск хулинче
Аслă шкул пĕтерне.
Раççей çулĕсем çинче
Сахал мар çӳренĕ.

Ача садёнче кайран
Вăрахчен ĕçленĕ.
Тăрăшнă мĕнпур вăйран
Сăпă тыл ĕçченĕ.

Качча кайнă. Пĕр ача –
Хĕрача çуратнă.
Тăр-пĕччен юлса пачах
Канлĕхне çухатнă.

Упăшки ун тăрăшса
Заводра ĕçленĕ.
Вăхăтсăр чире кайса
Кун-çулне вĕçленĕ.

Хĕрĕ кайнă ыр сынна -
Хăй шăпи, кун-çулĕ.
Марине пĕччен. Ăна
Пуснă пурнăç чулĕ.

Халĕ шĕкĕр хулара
Пур хваттер те дача.
Тĕпĕ-йĕрĕпе, ара,
Йăлт каласа пачĕ.

Чĕринче мĕн пуррине
Хĕветĕр пытармарĕ.
Хула тăрăх Марине
Хыççăн утăмларĕ.

Кĕçех унăн хваттерне
Пырса çитрĕç иккĕн.

Автор асăрхаттарнисем

«Марине» поэмăри персонажсем хушшинче автор шухăшласа кăларман ятсем пур. Акă вĕсем:

1) Митрахван – Андрей Михайлович Митрофанов (1907 – 1974), колхозри малтанхи механизаторсенчен пĕри пулнă, нумай çул хушши тĕп инженерта ĕçленĕ.

2) Кĕнеçке – Николай Григорьевич Князькин (1919 – 1943) Совет Союзĕн Геройĕ, танк механик-водителĕ. Вăтăрмĕш çулсенче колхоз шоферĕ пулнă.

3) Кармуççа Ванькки – Иван Иванович Корнилов (1904 - 1976), хими наукисен докторĕ, профессор, Ленин тата Патшалăх премийĕсен лауреачĕ, ача чухне Кивĕ Улхашри шкулта вĕреннĕ.

4) Шурек – Никифор Афанасьевич Шуреков (1916) геологипе минералоги наукисен докторĕ. Хусан университетне пĕтерсе тухнă. Халĕ Воркутара ĕçлет.

5) Итеç - Виктор Васильевич Итеç, геолог, чăвашсен малтанхи поэтессин Ваçça Аниççин шăллĕ, ача чухне Кивĕ Улхаш ялĕнчи шкулта вĕреннĕ.

6) «Карсаккух таврашĕнчен
Тухнă доктор-ăсчаха...»
Николай Иванович Карсаков (1929 – 1981), биолог, селекционер, ял хуçалăх наукисен докторĕ, профессор.

7) «Кашапа Кунтикавра
Тулăх çĕре сапăнчĕ...»
Иртнĕ ĕмĕрти вăтăрмĕш çулсенче Каша ачисем кӳршĕри Кунтикав ялне вĕренме çӳренĕ.

8) «Ячĕпех аса илер,
Ку – Лявантин ывăлĕ,
Тимĕр...»
Владимир Леонтьевич Цырульников (Садай) (1926 – 1991), чăвашсен паллă писателĕ.

9) «Йӳçĕ Макçăмăн алли
Пăхсан тӳрех сисĕнет».

Ĕлĕкрех чăваш тăлмачĕсем А. М. Горький аслă писатель ятне чăвашла çапла куçарса çырнă.

10) «Сатай ватă çын рольне...»

Сатай – А. Кăлканăн «Анисса» пьесинчи персонаж.

11) Миккалай шăллупала...»

Николай Андреевич Марков (1915 - ?), Ульяновскра пединститут пĕтерсе çичĕ çуллă шкулта математика учителĕнче ĕçленĕ. Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче хыпарсăр çухалнă.

12) «Кирпонос çар чаçĕнче
Кĕнĕ вилĕмлĕ вăрçа...»

Михаил Петович Кирпонос (1892 – 1941) генерал-полковник, Совет çар начальникĕ, Совет Союзĕн Геройĕ. Тăван çĕршывăн аслă вăрçи пуçланнă чух Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн çар командующийĕ пулнă. Вăрçăн малтанхи тапхăрĕнче вăл ертсе пынă çар чаçĕсем йывăр çухатусем тӳснĕ. Киев парăнсан çапăçу ункине татса тухнă чух йывăр аманса вилнĕ.

13) «Ват учитель урокне
Итленĕ чух шăп ларать».

Пелагея Петровна Иванова (1895 - 1977) – Ульяновск облаçĕнчи Чăнлă районĕнче учительсен ятлă-сумлă династине пуçарса янă учительница. Çамрăк ăрăва пĕлӳ парас ĕçре нумай çул хушши вăй хунăшăн ăна Ленин орденĕпе наградăланă.

Анатолий ЮМАН
(Анатолий Федорович ЕРМИЛОВ)

Марине

На чувашском языке

Под редакцией автора.
Корректоры: *Кузьмина Е.Н., Ларионов Н.Н.*
Компьютерный набор и верстка: *Г.Г. Семенова.*
Художник *Н. Еграшкина.*

Отпечатано с оригинал-макета заказчика.

Подписано в печать 21.09.05 г. Формат $60x80^1/_{32}$.
Бумага офсетная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 1,86.
Тираж 300 экз. Заказ № 2343.

ОГУП «Областная типография «Печатный двор».
432049, г. Ульяновск, ул. Пушкарева, 27.

ТЎРЛЕТНИ

Типографи айăпĕпе поэма вĕçĕ кĕнекене кĕреймесĕр сиксе юлнă. Акă вăл:

Куçран пăхрĕç пĕр-пĕрне
Тунсăхлăн та вичкĕн.

Урçа çын чун савнине
Ĕмĕр кĕтнĕ мар-и.
Яш чух калайманнине
Тин хăйса каларĕ.

...Вилĕмрен те вăйлăрах
Юрату кăварĕ.
Вăл пирте вутне вăрах
Сыхласа хăварĕ.

Çакă çутă тĕнчере
Юрату çеç паттăр.
Халь, апла-тăк, вăл пире
Вăй та тўсĕм патăр.

Сиртĕр тĕрлĕ чир-чĕре,
Чунсене вăраттăр!
Умри йывăр çул-йĕре
Хĕвел пек çутаттăр!

2004 çул, август – сентябрь.
Аслă Нагатка – Шĕнерпуç – Çĕнĕ Шупашкар.

20-мĕш страницăри аялтан тăваттăмĕш йĕркене çапла вуламалла:

"Çамрăк каччăна вăрах..."